24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941 НОЯБРЬ 29 ШАМАТКУН 282 (5997) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетариссем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАСАЧĔ.

Колхозри çамрăксен пысăк задачи

Колхозсенчи арçынсем чылайĕшĕ алла хĕпăшал тытса усал тăшмана хирĕç çапăçма фронта тухса кайрĕç. Халь кашни совет çынни, заводра-и. колхоза-и вăл, икĕвиçĕ çынпăн ĕçлеме тăрăшать. Ĕçĕн стахановла меточĕсем — майстанокпа тата профессиссемне ĕçлесси—ытларах та ытларах сарăлса пыраççĕ. Хĕрлĕ Çара кайнă юлташсен вырăнне хĕрарăмсем тăрса ĕçлеççĕ. Вĕсен шучĕ кулленех ӳсет.

Колхозсенче фронта кайнă арçынсем вырăнĕнче ĕçлекен хĕрарăмсем уйрăмах нумай. Кызыл Чишмари «Маяк» колхозра (Чкаловски район) ферма заведующийĕ пулса Сыраев юлташ ĕçленĕ. Вăл фронта кайнă. Халь унăн вырăнĕнче Майсербер Гайнуллина хĕрача ĕçлет. Вăл ертсе пыракан ферма вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе государство панă заданисене ытлашшипех тултарнă. Майсербер Гайнуллина юлташ тăрăшнипе ферма çурчĕсене хĕле кĕме тĕплĕ хатĕрлесе çитернĕ. Витесене тирпейленĕ. Вылăх-чĕрлĕх валли алапа-çимĕç кирлĕ таранах хатĕрленĕ.

Люксембург ячĕпе тăракан колхозра ферма заведующийĕ пулса М. Сорокина хĕрача начар мар ĕçлет. Ленин, Сталин тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсенче хĕрачасем фронта кайнă бригадирсем вырăнĕнче ĕçлеççĕ.

1939 çулта совет çĕршывĕн мухтавлă трактористкисем Паша Ангелина, Паша Ковардак тата ытти сем те çамрăк колхозницăсем патне çыру çыраççĕ. «Пирĕн тăван çĕршыври çамрăк патриотăсем, тракторпа ĕçлеме вĕренĕр! Пирĕн мăшăрсемпе тăвансем трактор çинчен танк çине куçса ларнă вăхăтра, эпир социализмлă уйăрсенче ĕçлесе тăван çĕршыва тĕреклетĕпĕр», тенĕ вĕсем хăйсен çырăвĕнче.

Çавăн хыççăн пиншер патриотăсем трактора ĕçлеме вĕренчĕç. Унтанпа комсомол организацийĕсем производствăран уйăрмасăр 100 пин ытла трактористка хатĕрленĕ. Мухтавлă трактористкăсем калани тĕрĕс пулчĕ. Хаяр вăхăт çитрĕ. Гитлерла вăрă-хуракçем çĕршыв умне пысăк хăрушлăх кăларса тăратрĕç. Мăшăрсемпе пиччесем танк çине ларчĕç. Хĕрарăмсем аслă уйăрсенче хастарлăн ĕçлеме тытăнчĕç.

Ноябрĕн 6-мĕшĕнче Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче Сталин юлташ: «пирĕн колхозниксем, арçынсемпе хĕрарăмсем, хăйсен уйăрĕсенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлени тата вĕсем фронтпа çĕршыва валли тырпул, аш-какай, промышленность валли чĕртавар ытларах парса пыни кирлĕ», тенĕ.

Сталин юлташ лартнă задачăна пурнăçа кĕртес тесе, пирĕн халĕ пурин те ырми-канми ĕçлемелле. Пĕтĕм вăл фронта пулăшнă çĕре ямалла.

Вăрнарти МТС-чи комбайнер Андреев юлташ Хĕрлĕ Çара кайнă. Унăн вырăнне ĕлĕк комбайнерăн помощникĕ пулнă Вера Тимофеева хĕрача ларнă. Тимофеева юлташ ĕçе тĕплĕ тăвать, нормăна ытлашшипех тултарать. Хĕрлĕ Чутайри МТС-чи трактористка Жаркова юлташ вăрçă вăхăтĕнче трактор рульне тытнă. Вăл нормăна 130 процент тултарать, 10-шар килограмм таран горючине перекетлет.

Колхозсен экономикин хăватлăх ӳссе пынă май, общественнăй суртийĕрсем тăвасси те сарăлсах пырать. Анчах çамрăксем, колхоз производствинче кирлĕ ĕçсене пĕлмен пирки, вăл строительствăсене хутшăнаймаççĕ. Сăмахран, тимĕрçĕ, плотник, столяр тата ытти çаван пек специальноçсене пĕлни калама çук кирлĕ. Çав специальноçсене пĕлекен çынсем çитмен пирки, колхозсем час-часах кӳршĕ ялсенчи çынсене тытса ĕçлеттереççĕ. Çамрăксем çав ĕçе хăйсем тунă пулсан, колхозăн укçине пинĕ-пинĕпе перекетленĕ пулĕччĕç.

Республикăри малта пыракан «Дичамо» колхозри (Куславкка р-нĕ) комсомолецсем пĕлтĕр республикăри комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксене колхоз производствинче кирлĕ специальноçсене вĕренсе алла илме чĕнчĕç.

Çамрăксем колхоз производствинче кирлĕ кирек мĕнле специальноçа та ăнăçлăн вĕренме пултарнине кăтартса паччĕç. Динамовецсен пархатарлă пуçăвĕ республикăри нумай колхозсенчи комсомолецсемпе çамрăксене хускатрĕ. Çамрăксем ăна кăмăллаççĕ. Хĕл вăхăтĕнче республикăри темиçе пин комсомолец тата союзра тăман çамрăксем колхоз производствинче кирлĕ специальноçсене вĕренчĕç.

Халĕ, колхозри ĕçе хăнăхса çитнĕ çынсем нумайĕшĕ фронта кайнă вăхăтра, çамрăксене, уйрăмăнах хĕрачасене, колхоз производствинче кирлĕ специальноçсене вĕрентни питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çамрăксене колхоз производствинче кирлĕ специальноçсене вĕрентни общественнăй хуçалăха тĕреклетме, пурлăха тирпейлĕ тыткалама май парать. Çамрăксем ĕçе часах вĕренсе çитме пултараççĕ, анчах вĕсене ĕçе ăвăстармалла.

Колхоз хуçалăхĕнче кирпĕч, известь тата черепица таврашсем пит кирлĕ. Вĕсене те тума пĕлмелле. Паллах, вăл ĕçсене те çамрăксем вĕренме пултараççĕ, вĕсене ватă колхозниксем — ĕç ăстисем сумне çирĕплетсе вĕрентмелле.

Колхозра халь пĕтĕм ĕç машинăсемпе пулса пырать. Вĕсемпе ĕçлеме тата вĕсене тӳрлетме пĕлекенсем кирлĕ. Кашни колхозра çамрăк машиновед-семпе мастерсем пулмалла. Çамрăксем колхозри кирек мĕнле сложнăй машинăпа та ĕçлеме пĕлмелле.

Хулаченчи, ялсенчи вăтам шкулсенче тата ытти вĕренӳ заведенийĕсенче вунпăр пин çамрăксем вĕренеççĕ. Вĕсем пурте тăван çĕршыва усăллă çынсем пулма тăрăшаççĕ. Çав çамрăксем тракторсемпе, молотилкăсемпе тата ытти машинăсемпе ĕçлеме тата агротехникана вĕренсен, вĕсем çу вăхăтĕнче колхозсене пысăк усă пама пултараççĕ. Çамрăксене шкулсенче машинăсен техникине тата агротехникăна вĕренме пулăшмалла. Пирĕн час-часах çакăн пек пулать: шкулсенче вĕреннĕ хăшĕпĕр çамрăксем колхоза нимĕнле практикăллă пулăшу та пама пултараймаççĕ. вĕсем инейкăсемпе ĕçлеме те пĕлмеççĕ.

Вăтам тата аслă шкулсенче вĕренекен çамрăксем фронта кайнă юлташсем вырăнĕнче ĕçлеме пултарччăр. Çамрăксен ялхуçалăх машинисемпе ĕçлеме пĕлмелле. Çак ĕçе шкултах вĕренсе пымалла. Шкулсенчи çамрăксене ялхуçалăх ĕçĕсем çинчен вĕрентме ялхуçалăх специалисчĕсене, чи лайăх трактористсемпе комбайнерсене тата механиксене ăвăстармалла.

Хĕллехи вăхăтра усă курса, колхозри кашни çамрăкăн, уйрăмăнах хĕрачасен уйăрăн ĕçĕн мĕнле те пулин специальноçне вĕренсе алла илме тăрăшмалла.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН

УКАЗĔ

Британи Королевствин Сывлăш Флочĕн летчикĕсене Ленин орденĕпе наградăласси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюлăхпа хастарлăх кăтартнăшăн Британи Флочĕн çак летчикĕсене ЛЕНИН орденĕпе наградăлас:

ИШЕРВУД полковника — **МИЛЛЕР** майора

РУК майора — **ХОУ** сержанта.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

1941 çулти ноябрĕн 27-мĕш.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Ноябрĕн 27-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 27-мĕшĕнче пирĕн войскăсем пур фронтсенче те противника хирĕç çапăçнă.

Ноябрĕн 26-мĕшĕнче немĕçсен 19 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 4 самолет пĕтнĕ.

Ноябрĕн 27-мĕшĕнче Мускав патĕнче немĕçсен 15 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Ноябрĕн 26-мĕшĕнче пирĕн авиаци немĕçсенне 105 танк, войскăсем ларса пыракан 600 автомашинăна сити, 10 полевой сруди, снарядсем тиенĕ 190 лава, горючи тултарнă 7 автоцистерна пĕтерсе тăкнă, тăвăн пехотине пĕр полк ытларах тата утлă çăран пĕр эскадронне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чассем пĕр кун хушшинче немĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 2.000 çын ытла вĕлерсе пĕтернĕ, противникăн 15 танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн артиллеристсем тĕл персе юлашки икĕ кун хушшинче немĕç сруди йĕсен 6 батарейине пусарса лартнă, пулеметсен 8 йăвине пĕтерсе тăкнă тата противникăн çĕрпе йывăçран тунă 20 укрепленине çапса аркатнă. Совет артиллеристĕсем тăвăнăн боеприпассен складне взрыв туса сирпĕтнĕ тата противник пехотине пĕр рота ытларах вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем хăйсем тытăкăна илнĕ красноармеецсене тискеррĕн асаплантараççĕ. Никулино ялĕнче фашистсем аманнă красноармеец-артиллеристсене 8 сынна касса вахлаççĕ. Вĕсенчен виççĕшĕнче пуçĕсене касса татнă. Сыхăну ротин командирĕ Мочалозпа рота политрукĕ Гумарев юлташсем Малеево ялĕнче тискеррĕн таткаласа пĕтернĕ Лапенко, Цолсз, Фивченко красноармеецсен виллисене тупнă. Аманнă красноармеецсене фашистсем урса кайсах мăшкăлласа пĕтернĕ, унтан вĕсен куçĕсене чавса кăларнă, сăмсисене касса илнĕ, пырĕсене касса татнă. Екатериновка ялĕнче Н-ски стрелковăй полкри санитарнăй инструктор Никифоров виллине тупнă. Пывăр аманнă санитар-красноармееца гитлеровецсем прикладпа çапса пĕтернĕ, штыксемпе чикнĕ, питне бритвапа каскаланнă.

* * *

Кăнтăр фронтĕнче тытăкăна илнĕ немĕç салтакĕсем Германи войскисен пысăк сухатăвĕсем çинчен каласа параççĕ. 16-мĕш танковăй дивизин 64-мĕш мотополкĕнчи ефрейтор Альберт Эмден çапла пĕлтернĕ: «Ноябрĕн 10-мĕшпе 11-мĕшĕнчи çăтăçусенче пирĕн дивизи хăйĕн танкĕсене 200-тен кая мар тата хăйĕн автотранспортне 25 процент сухатрĕ. Вăрçă пуçланнăранпа 64-мĕш мотополка çынсем пилĕк хутчен хушса панă. Юлашки çăтăçусенче полк хăйĕн личнăй составĕнчен каллех çуррине сухатрĕ. Взвод командирĕсем пурте стройран тухрĕç. Халĕ вĕсене фельдфебельсемпе уллăштарнă. Вĕçĕмрен çынсем хушса парса пынă 7-мĕш рота вăрçă пуçланнăранпа, вилнисемпе аманнисене пĕрле шутласан, 170 çын сухатнă. Юлашки икĕ эрне хушшинче Совет авиацийĕ пире питĕ вăйлăн пыра-пыра çапрĕ. Вырăс самолечĕсем пирĕн полк çине кунсерен вунпăр хут пыра-пыра тапăнаççĕ». 4-мĕш авиакорпусри истребительнăй авиацин 52-мĕш отрядĕнчен тыткăна лекнĕ Готвальд Бернгард немĕç авиацин сухатăвĕсем çинчен çапла каласа панă: «Немĕç летчикĕсем немĕç авиацийĕ Хĕвелтухăçĕнче хăйĕн сывлăш-çар вăйĕсен личнăй составĕнчен çурринне яхăн сухатнă, тесе шутлаççĕ. Икĕ уйăх çурă хушшинче 52-мĕш авиаотрядри 28 самолетран 20 машина пĕтнĕ. «Юнкерс-88» йышши 20 самолетран тăнă бомбардировочнăй авиацин пĕремĕш группине пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Румынсемпе итальянецсен экспедиционнăй авиачăсĕсен те пысăк сухатусем пулчĕç».

* * *

Тутар республикинчи ĕççыннисем патшалăхăн ĕçлесе Хĕрлĕ Çара пысăк пулăшу параççĕ. Тир тăвакан 2-мĕш номерлĕ фабрика, «Серп и молот» завод тата тир-çăран фабрики хăйсен çулталăкăн планĕсене срокчен тултарнă. Федин юлташ директор пулса ĕçлекен завод рекордлă кĕске вăхăт хушшинче çĕнĕ производство организациленĕ, фронта валли кирлĕ продукци туса кăларма тытăннă. Н-ски водри Ульфтин юлташ ертсе пыракан цех продукци туса кăларассине çичĕ хут çурă ӳстернĕ. Çак цех икĕ çулăх план тултарнă. Республикăри колхозниксем те пысăк çĕкленӳне ĕçлеççĕ. Тюлячински районри «Марс» колхоз членĕсем Сталин юлташăн докладне сӳтсе-явнă хыççăн обязательнăй поставкăсенчен ирттерсе государствăна 12 пин пăт тырă сутма йышăннă. Теньковски районри «Канаш» колхоз оборона фондне 6 пин пăт тырă панă. Лашпевски районри «Красное знамя» колхоз членĕсем оборона фондне 600 пăт тырă параççĕ. Унсăр пуçне кашни колхозник оборона фондне сысна çури парать. Çак колхозăн пуçарăвне республикăри ытти колхозсем сарса пыраççĕ.

Ноябрĕн 28-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 28-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç пур фронтсенче те çапăçнă.

* * *

Кăнтăр фронтĕнче кĕрешекен пирĕн летчиксем немĕçсенне пĕр кун хушшинче 10 танк, пехота ларса пыракан тата боеприпассем тиенĕ 30 автомашинăна тытăнă, çар грузĕсем тиенĕ 90 лав ытла, 9 полевой орудине пĕтерсе тăкнă тата противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 1000 çын ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Сывлăшри çăтăçусенче немĕçсен 2 самолетне персе антарнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче кĕрешекен пĕр зенитнăй чăн боецĕсем икĕ кун хушшинче немĕçсен 4 бомбардировщикне персе антарнă. Çав вăхăт хушшинчех Смирнов юлташ военком пулса тăракан подразделенири зенитчиксем хăйсен орудийĕсенчен неприятелĕн 150 салтакне çити пере-пере вĕлернĕ.

* * *

Ленинград облачĕн немĕçсем оккупацленĕ районĕсенче кĕрешекен партизансен отрячĕсем юлашки пилĕк кун хушшинче темиçе ăнăçлă операци пуçа ирттернĕ. К. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансем кăмăллăн пырса тапăнса, противникăн виçĕ орудиллĕ батарейине пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинчех фашистсене хирĕç персе тăнă чухне партизансем нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 70 çынна вĕлерсе пĕтернĕ. П. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен группи телефонпа телеграф сыхăнăвне чылай çĕрте пыра-пыра татнă, чугунçула аркатса тăкнă тата чугунçул станцине çунтарса янă. Н-ски районра кĕрешекен партизансен отрячĕсем противникăн пĕр орудине пĕтерсе тăкнă, икĕ кăпере варыв туса ар-

Колхозниксем ĕçшĕн тĕштырă илеççĕ

СОВЕТСКОЕ. (Телефон тăрăх). Сталин юлташ ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме тата Хĕрлĕ Çара пур майсемпе те пулăшма чĕнисе калани районри колхозниксен ĕçлес хастарлăхне темиçе хут вăйлатрĕ. Колхозсем хăвăртрах авăн çапса пĕтерме, Хĕрлĕ Çара ялхуçалăх продукчĕсем ытларах парса тăма тăрăшаççĕ.

Нумай колхозсенче кунĕн-çĕрĕн авăн çапаççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем авăн çапнă çĕрте хăйсен нормисене ирттерсе тултараççĕ. Авăн çапнăшăн, кĕлте турттарса капана ывнăшăн ĕçкунĕсем панисĕр пуçне пĕштырă памалла туни колхозниксен тултарулăхне татах та çĕклерĕ. Çак кунсенче икĕ колхозра авăн çапса пĕтерчĕç.

«Крестьянская газета» колхозра мотолитлăкăсемпе авăн çапнисĕр пуçне тăпачăпа çапассине те йĕркеленĕ. Е. Волкова, Якимова юлташсем, пурĕ 6 çын, пĕр кун хушшинче пăпачăпа 1.020 килограмм авăн çапнă. Вĕсем хăйсен нормисене ирттерсе тултарнăшăн çĕнĕ йĕрке тăрăх 4,2-шер килограмм тĕштырă илеççĕ.

«За коммунизм» колхозри 67 çулти К. Зубков юлташ авăн çапнă çĕрте авăн ĕçлет. Ноябрĕн 27-мĕшĕнче вăл авăн çапнă çĕрте нормăна ытлашшипех тултарнă. Çазăннăн вăл ĕçкунĕ илнисĕр пуçне 3,4 килограмм тĕштырă илет.

Районри чылай колхозсем декабрĕн 1-мĕш тĕлне авăн çапса пĕтерессишĕн кĕрешеççĕ.

М. ЮХТАРОВ.

Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Итемсем çинче хĕрӳ ĕç пырать

ИШЛЕЙ. Районри чылай колхозсем кĕлте турттарса капана хывас тата авăн çапас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ. Авăн çапнăшăн, тырă турттарнăшăн, çавăн пекех кĕлтесене капана хывнăшăн натурăпа тӳлемелли çĕнĕ йĕрке ялхуçалăх ĕçĕсен хăвăртлăхне вăйлатрĕ. Юлашки кунсенче «Тукас», «Мотор», «Явăш» тата Ильич ячĕпе тăракан колхозсенче авăн çапасси чылаях вăйланчĕ. «Тукас» колхозра ноябрĕн 14-мĕш тĕлне тырпулсене çурринне çеç çапнă пулнă. Сталин юлташ докладне сӳтсе-явнă хыççăн колхозниксемпе колхозницăсем вунă кун хушшинче авăн çапса пĕтерме пулнăччĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем кашни кун ирхине ирех ĕçе тытăнса сĕм тĕттĕм пуличченех итем çинче ĕçлерĕç.

«Тукас» колхоз ноябрĕн 20-мĕшĕнче авăн çапса пĕтерчĕ. Сталин юлташ докладне сӳтсе-явнă хыççăн илнĕ обязательствăна пилĕк кун малтан пурнăçларĕ. Тепĕр пилĕк кунтан Ильич ячĕпе тăракан колхоз та авăн çапса пĕтерчĕ.

Катраç ялсоветне кĕрекен «Явăш» колхозра та авăн çапасси анлăн сарăлса пырать. Кашни кун итем çинче 100 — 120 çын ĕçлет. «Мотор» колхозра сложнăй молотилкăпа Родионов машиновед авăн çапать. Вăл машиновед пулнипе пĕр вăхăтрах тракторист ĕçне те хăех туса пырать. Радионов юлташ ноябрĕн 15-мĕшпе 25-мĕш хушшинче 100 тонна ытла авăн çапнă.

Çапла ĕнтĕ, Катраç ялсоветĕнчи колхозсем декабрĕн 1-мĕш тĕлне авăн çапса пĕтереççĕ.

С. ГОРЛАНОВ.

Авăн çапса пĕтерессишĕн кĕрешеççĕ

КАНАШ. Партипе правительство авăн çапса пĕтерме кăтартса панă срока тата ĕçшĕн хушса натурăпа тӳлемелле тунине колхозниксем чĕререн ырлаççĕ, вĕсем халĕ тата тухăçлăнрах ĕçлеме тытăнчĕç.

Молотов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем ĕçре паха теслĕхсем кăтартаççĕ. Кунта кĕлте турттарма 30 лаша тата 30 çын уйăрнă. Вĕсем ир пуçласа кăчченех хĕрӳ ĕçре. 63 çулти П. Афанасьев, 62 çулти Я. Александров, 66 çулти Г. Павлов колхозниксем кĕлте кӳрсе, капан тăвас тĕлĕшпе пĕр татăлмасăр ĕçлеççĕ.

Колхозра машинно-тракторнăй станцин «МК-1100» молотилки ĕçлет. Машиновед А. Иванов юлташ, молотилкăна талăкра 20 сехетрен кая мар ĕçлеттерсе, 12—14 тонна авăн çапать. Куксăр пуçне колхозниксем куксерен тăтачăпа 300-шер пăт çапаççĕ. Çапла вара колхоз декабрĕн 1-мĕш тĕлнех авăн çапса пĕтерет. Кĕлте турттарса капана хывнăшăн тата авăн çапнăшăн колхозниксем ĕçкунĕсемсĕр пуçне тĕштырă илеççĕ.

Ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçленĕ май, колхоз ялхуçалăх продукчĕсене государствăна тăратать. Çак кунсенче колхоз 54 центнер купăста, 20 центнер ашкакай, 25 центнер çĕрулми, 5600 литр сĕт тăратрĕ. Обязательнăй йĕркепе тырпул, аш-какай, сĕт-çу тăратмалли обязательствăна тултарчĕ, 1942 çулăн пĕр центнер аш-какай пачĕ.

Тырпулăн кĕрешни — тăван çĕршывăн, ирĕклăхĕн кĕрешни пулать Çак шухăшпа ĕçлеççĕ «Красная Чувашия» колхоз членĕсем. Колхозниксем 215 гектар çинчи тырпула пĕр тăкăламасăр пухтарса кĕртрĕç. Ноябрĕн 20-мĕшне ыраша, кĕрхи тата çурхи тулла çапса пĕтерчĕç. Халĕ юлашки сĕлĕ кĕлтисене çапаççĕ.

Машинно-тракторнăй станцин чылай тракторисчĕсемпе машиновечĕсем тата комбайнерĕсем декабрĕн 10-мĕш тĕлне авăн çапса пĕтерме колхозсене пулăшаççĕ. Н. Павлов юлташ ертсе пыракан бригада тухăçлăн ĕçлет. Бригадăра молотилкăпа комбайна талăкра 20 сехетрен кая мар ĕçлеттереççĕ. Çапла вара «МК—1100» молотилкăпа кунне 12 тонна авăн çапас вырăнне 15—19 тонна çапаççĕ.

И. МАЛОВ.

Англи хăçачĕсем Ливири наступлени çинчен

ЛОНДОН, ноябрĕн 27-мĕш. (ТАСС). «Дейли мэйл» тата «Йоркшир пост» хăçатсем Ливири вăрçă ĕçĕсене сутатса парса, çапăçу вăрăма тăсăлмалла тата йывăр пулмалла, тесе асăрхаттараççĕ. «Йоркшир пост» хăçат, Черчилль ăнлантарса панă тăрăх, Англи войскисен Ливири малтанхи наступленийĕ стратеги тĕлĕшпе палăртнă тĕп наступление хатĕрленни пулать, тесе кăтартса парать. Пĕрремĕш задача вăл—противника çыран патне ĕçсе пырасси, унăн коммуникацине пăсасси тата ăна Бенгази енне чакма парса тăрасси пулнă. Иккĕмĕш задача вара тăшмана йăлтах çĕмĕрсе тăкма е капитуляци тутарма хупăрласа илесси пулать.

«Дейли телеграф енд морнинг пост» хăçатăн Каирти корреспиденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, çар çыннисен шухăшĕпе, танксен вăйлă çапăçăвĕ çывхарса килет. Çав вăхăтрах Англи войскисене снабжени парса тăрасси йĕркеллĕн пулса пырать, немĕçсен запасĕ чакса вăйсăрланать. Немĕçсем Сиди-Резехра кăнтăртан тапăнса пыракан Англин мотомеханизированнăй колоннисемпе Тобрукран тапăнса пыракан Англи часĕсем хушшинчи уçă коридора сыхласа хăварма тăрăшаççĕ, çав коридор вара çапăçусен ăнăçлăхне татса памалла. Немĕçсем кунта хăйсен аллинчи мĕнпур резервсене илсе пуха тăратасçĕ пулас. Немĕçсен Сиди-Резехран пыракан çапăçăвĕ ăнăçсăр пулсан, вараннине пулнă.

Англин информаци министерстви пĕлтерни

ЛОНДОН, ноябрĕн 27-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 27-мĕшĕнче ирхине Çĕнĕ Зеланди войскисем тата Англи танкĕсем Тобрук гарнизонĕн малти чарăсемпе дĕрлешнĕ.

Рейтер агентстви Англи патрульне Нормандие антарни çинчен пĕлтерет

ЛОНДОН, ноябрĕн 25-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 24-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англин пысăк мар патрулĕ Нормандире, Франци çыранĕ çине аннă, кайран çав патруль хăйĕн тĕрĕс-тĕкĕл йышăнса каялла тавăрăннă. Çакăн çинчен Лондонра официальнăй йĕркепе пĕлтереççĕ.

„Комсомол Чувашии“ бронепоезда тума укса-тенкĕ пухаççĕ

СЕНТĔР. Октябрьски районри «Большевик» промартельри комсомолецсемпе çамрăксем чĕнсе каланине Мăн-Сентĕрти вăтам шкулта партсобрание сӳтсе-явнă. Сӳтсе-явнă ыйăçăнах бронепоезда тума коммунистсем: Кваскова—200 тенкĕ, шкул директорĕ—123 тенкĕ, учитель-орденоносец Багров—100 тенкĕ, Микешкин—60 тенкĕ, учительница Федорова—100 тенкĕ укçа панă. Çавăнтах 583 тенкĕ пухăннă.

Çак ыйтăва профсоюз членĕсен шухăвĕнче те сӳтсе-явнă. 55 çулхи учительница Петрова юлташ (вăл çак шкулта 25 çул ĕçлет) бронепоезд тума 300 тенкĕ, Максаченко—100 тенкĕ, Колокольчикова — 100 тенкĕ, Матюкова (унăн упăшки фронтра)—150 тенкĕ панă. Шкулĕпе бронепоезд тума пурĕ 1447 тенкĕ укçа пухăннă. Ноябрĕн 23-мĕшĕнче шкулта воскресник туса ирттернĕ. Шкул валли вутă пуртарнă. Ĕçлесе илнĕ укçана оборона фондне хывнă.

С. ИВАНОВ.

* * *

ОКТЯБРЬСКОЕ. «Большевик» промартельри комсомолецсемпе çамрăксен пуçарăвне районри ытти çамрăксемпе ĕççыннисем те ырлаççĕ. Бронепоезд тума районри ĕççыннисенчен кашни кунах темиçе çĕршер тенкĕ укçа пухăнать. Халĕ пурĕ 17 пин тенкĕ ытларах пухăннă та. Шĕнерпуçĕнчи вăтам шкулти комсомолецсем кăна 300 тенкĕ пухса панă. Хуракассинчи вăтам шкулта 310 тенкĕ, Киров ячĕпе тăракан колхозра—1.200 тенкĕ, Вăрман Кушка колхозĕнчи комсомолецсем 200 тенкĕ пухнă.

Т. ЧУПРАКОВА,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

* * *

ЕТĔРНЕ. Районри ĕççыннисем бронепоезд тума укçа-тенкĕ пухас ĕçе активлăн хутшăнаççĕ.

«Комбайн» колхозра кăна 1.080 тенкĕ пухнă.

Чебаковски шкул директорĕ Жидков юлташ 100 тенкĕ, учительница Лукина — 100 тенкĕ, вĕренекенсем 15—20-шер тенкĕ укçа панă.

«Красный пахарь» колхозри колхозниксенчен пурĕ 700 тенкĕ пуçтарăннă.

Укçа-тенкĕ пухас ĕç районра малалла пырать.

* * *

СВБ Чăваш Советĕнче ĕçлекенсем «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума хăйсен ноябрь уйăхĕнче ĕçлесе илнĕ ĕçӳкçинчен 105 тенкĕ банка хывнă. Вăл шутран Сютруков юлташ 40 тенкĕ, Никитина — 30 тенкĕ, Тимофеев — 20 тенкĕ, Николаева — 15 тенкĕ панă.

Ф. Т.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Тăшмана Мускав стенисем патне ямалла мар

ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, ноябрĕн 26-мĕш. Нимĕçсем Мускав çине наступлени пуçланă иккĕмĕш вунăкунлăха кĕчĕ. Мускав патне çитмелли кĕскерех çулсем çинче нимĕçсене хирĕç вăйлăн тăнă пирки, нимĕçсем халĕ ĕнтĕ хăйсен умне Мускава çурçĕрпе кăнтăр енчен аякпипе кĕрсе кайса çавăрса илес задача лартнă пулмалла.

Çав вăхăтрах фашистсен генералĕсем Мускав патне çитмелли кĕскерех çулсем çине пухма май паракан вырăнсене те шыраса тупаçăн.

Çурçĕр енчи участоксенче нимĕçсен кăштах малалла куçма май килнĕ. Совет чăрсем фашистсен колоннине атакăласа пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех çĕмĕрнĕ, тăшман пехотин полкне пĕтерсе тăкнă, противникăн 15—20 танкне пама 8 орудине стройран кăларнă. 106-мĕш пехотнăй дивизин 240-мĕш полкĕнчи батальонăн штабне, мĕнпур документĕсемпе пĕрлех, тытса илнĕ. Çакăн пек пырса çапнă пирки тăшманăн маналла каяс кăвăртлăхĕ чакнă.

Сталиногорск енче уйрăмах хаяр та вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Противник, çав вырăна виçĕ танковăй дивизи тата виçĕ пехотнăй дивизи илсе пырса, 12—15 километр сарлакĕш фронтпа наступлени пуçа пырать. Çак участокра фашистсем пысăк çухатусем тăççĕç. В. хула районĕнче икĕ кун хушшинчех тăшманăн 49 танкне, унăн пехотине пĕр полк тытса тата тăхăр орудине пĕтерсе тăкнă. Анчах та тăшман пире çурçĕр еннелле хĕссе пыма тăрăшать.

Нимĕçсем Мускав патне çитмелли кĕскерех çулсем çине пухма хăтланни çинчен эпир çулте каланăччĕ. Нимĕçсем Ленинградпа Волоколамск шоссе çулĕсем çине пухма кăнтăр-хĕвелтухăç еннелле малалла çуçаçăн. Анчах та Гитлер ноябрьти наступлени çине хунă шанăр пурнăçа кĕмерĕ. Хĕвелтухăçĕнче наступлени тунине Германири хуласемпе ялсем çав тери пывăрран чăтса иртпереççĕ. Литвăна ятлă вырăнтан Штангель Рупорт, урана тăхăнмалли япаласемпе супу-илу тăваканскер, Хĕвелтухăç фронтне çапла çырать: «Пирĕн пĕчĕк ялтанах çак вăхăт хушшинче Кабилер Пауль, Мейер Франц, Аугсбургер Тео, Вассар, Эберман, Себальд, Брунмиль Фоглерăн 2 ывăлĕ, Винтерблат, Розăн пиччĕшĕ Вебер Эмиль, Ламер Цвикнагель, Оберберг—вилчĕç. Мĕнчухлĕ çамрăк çынсем! Вăрçă халех пĕтессе çеç шанаплăр».

Фердинант салтак патне Анна Панке çапла çырать: «Хаклă Фердинант, нумайĕшĕсем çинчен е вилнĕ, е аманнă тесен çавтери йывăр хыпарсем çитрĕç. Шкулта пĕрле вĕреннĕ манăн сывăх тус, май уйăхĕнче качча пухнăскер, паян акă хăйĕн упăшки вăрçăра вилни çинчен хыпар илчĕ. Пирĕн пĕлĕт çинчи аттемĕр—турă та пулин пире ăнланса илинччĕ, пире пурсăмăра та, уйрăмах сире, салтаксене, шулăшинччĕ».

Гитлер пуçласа янă вăрçа, Германи халăхне çавтери йывăрлăхпа асап кăтартакан тата куçуль тăктаракан вăрçа, Германи тата мĕн чухлĕ вăхăт чăтса тăма пултарĕ-ши? Çапăçусен кашни кунĕ, кашни сехечĕ фашистсене çĕнĕрен те çĕнĕрен сиен кĕрет, фашистсен салтакĕсемпе офицерĕсен виллисем купи-купипе выртса юлнă.

Хăюллă хĕрлĕ воинăн, Сосновский комсомолецăн, çавтери тĕлĕнмелле патăр ĕçне Хĕрлĕ Çар тата совет халăхĕ нихăçан та манас çук!

Сосновскин паттăр ĕçĕ

МАЛО-ЯРОСЛАВЕЦ ЕНĔ, ноябрĕн 26-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Боецсем тăшмана хирĕç атакăна кайнă. Анчах та флангран тăшманăн ДЗОТ-ĕнчен питĕ вăйлăн персе тăни пирĕн боецсене наступлени пума çарса тăнă. Нимĕçсем татти-сыпписĕр пуç-çулăм тăкнă. Çакă пирĕн боецсене тарăхтарнă. Вара Сосновский комсомолец хăйне паллă маскировка туса, фашистсен ДЗОТ-ĕ патне никам сисмелле мар шăвăнса пынă та пулеметăн ствопне ярса тытнă. Пулеметран пеме парас мар тесе, вăл ăна пĕтĕм утăвĕпе купăрласа тăрса, пулеметăн ствопне çĕр çумнелле пусса антарма тытăннă. Фашистсен пулеметчĕ тепĕр черет персе комсомолецăн кăвăрне шăтарса пухнă та пеме чарăннă. Пулеметран пеме Сосновскин ӳтпĕвĕ чăрмантарса тăнă пирки нимĕçсем урăх персе тăма пултарайман. Пирĕннисем çав самантрах тăшман çине тăвăллăн пырса тапăнса, фашистсен укрепленине çĕмĕрсе тăкнă, командованин приказне пурнăçа кĕртнĕ. Çапăçу пулнă вырăнта нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсен виллисем купи-купипе выртса юлнă.

Хăюллă хĕрлĕ воинăн, Сосновский комсомолецăн, çавтери тĕлĕнмелле патăр ĕçне Хĕрлĕ Çар тата совет халăхĕ нихăçан та манас çук!

Фашистсен çухатăвĕсем

КАЛИНИН, ноябрĕн 26-мĕш. (ТАСС). Паян çанталăк ялăххине пăхмасăрах, пирĕн летчиксем тăшман пухăнса тăнă вырăнсем çине бомбăсем пăрахнă. Нимĕçсен 20 танкне çити, 45 автомашинине пĕтерсе тăкнă тата фашистла захватчиксене темиçе çĕр çынна вĕлерсе пĕтернĕ. Пирĕн çăвçем чылай ӳчастоксенче нимĕçсене хăвашатса пыраççĕ, вĕсене сывă çине хăвала-хăвала кăлараççĕ.

Юлашки кунсенче нимĕçсем кунта пысăк активлăхах кăтартмаççĕ. Çакна нимĕçсем Калинин районĕнче пысăк çухатусем тӳснипе ăнлантарса тăмалла. Вунă кун хушшинчех С. районĕнче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 5.000 çын вилнĕ тата аманнă. П. районĕнче пирĕн боецсем вунă кун хушшинче нимĕç захватчикĕсене 8.500 çын вĕлерсе пĕтернĕ.

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç ăнăçлăн кĕрешекен командир Зайцев юлташăн участокĕнче, нимĕçсем, каялла чакнă чухне, хăйсен вилнĕ тата ывăр аманнă салтакĕсене çунтара-çунтара янине палăртнă.

Çирĕпрех пулар!

ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, ноябрĕн 27-мĕш. Иртнĕ талăк хушшинче Клин тата Волоколамск енĕсенче уйрăмах вăйлă çапăçусем пулса пынă. Клин енче противник малтанхи пекех кăнтăралла кайма пултараймасть. Тăшман пехотăн пĕр дивизине, пĕр моторизованнăй тата танкăсăр танковăй дивизисене çурçĕр-хĕвеланăç енне куçарнă. Волоколамск енче тăшман пирĕнниссене кăштах хĕснĕ, çăмахран Н. пункта йышăннă. Çав пункта йышăнса илессишĕн темиçе кун хушши вăйлă çапăçусем пынă. Можайск енче темиçе вырăнта пирĕн артиллери вăйлăн персе тăнипе тăшманăн пухăнса тăнă войскисене сапаласа янă. Тула хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерескри районра противник наступлени тума кăтланса пăхнă, анчах тăшман кунта пысăк çухату тӳснĕ. Сталиногорск енче пирĕн чăсçем ывăр çапăçусенче противника çĕмĕрсе хĕссе пыраççĕ. Т. ялĕн районĕнче пирĕн чăсçем тăшманăн мĕнпур атакисене сире-сире яраççĕ, пирĕн войскăсем тĕл пулнисене хăйсен алли-ринче çирĕпĕн тытса тăраççĕ.

Туллимар даннăйсем тĕрăх, пирĕн летчиксем пĕр кун хушшинче нимĕçсен 15 танкне çити, тăватă танкеткине, 160 автомашинине стройран кăларнă, противник пехотине пĕр батальона çити тата кавалерин эскадронне пĕтерсе тăкнă.

Юлашки кунсенче противник хăйĕн вăйне хĕзелтухăçнерех, куçарса хăйĕн флангĕсенче ытларах пухса тăратнă.

Çапла вара Мусказ оборонин участокĕсенчен пĕрини пĕн, çавнашкалах тата уйрăм çулсемшĕн хăрушлăх тухса тăчĕ. Хăйсен фрончĕсенчи çитĕнӳсене çирĕплетсе, Германи командованийĕ вăй пухать, çавна май хăйĕн фронтне вăйлатма тăрăшать. Нимĕçсен флангсенчи чăсĕсене, çăмахран, бумай йышлă пухса тăратнă танксене снабжениле çар хатĕрĕсем парса тăрасси йывăрлансах пырать. Çав вăхăтрах наступлени тăвакан Германи войскисен флангĕсене пирĕнпе пĕрлехсем кунран-кун вăйлăнрах пыра-пыра çапаççĕ.

Нумĕçсен Мусказ патĕнчи çухатăвĕсем питех те пысăк. Халĕ илнĕ данăйсем пăрăх, нимĕçсем ноябрь уйăхĕнче наступлени тунă вăхăтра, ноябрĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа ноябрĕн 25-мĕшне çитиччен Мусказ патĕнче 330 танк çухатнă, Германин çар машинни питех те пысăк йывăрлăхра, çав йывăрлăха вăл нумайлăха чăтса тăма пултарĕ-ши вара? Анчах хальхи вăхăтра Мускавшăн тухса тăнă харушлăх вăйланчĕ. Тапăнса килекен противника хирĕç пыракан кĕрешӳ Мускава хӳтĕлекен кашни çыннăн татах та çирĕпрех, татах та хăюллăрах пулма ыйтать. Пĕр утăм та каялла чакмалла мар, кашни пусăм çĕре, халăх пурăнакан кашни пункта, кашни рубежа çирĕп тытса тăмалла — çакă пирĕн воинсен чыслă ĕçĕ.

П. ЛИДОВ.
(«Правда»).

Оборона рубежĕсене çирĕп тытса тăраççĕ

КАЛИНИН ФРОНЧĔ, ноябрĕн 26-мĕш. **(ТАСС спец. корр.).** Пирĕн оборонăн участокĕсенчен пĕринче ноябрĕн 25-мĕшĕнче тăшманăн войскисене хирĕç хаяр çапăçу пуçланса кайрĕ. Назаренко командирăн стрелковăй подразделенийĕсем Х. пункт çине атакăлама тытăнчĕç. Артиллерирен перспе пулăшнипе тата автоматчиксем пулăпса тăнипе совет пехотинецĕсем, Х. пункта кĕрсе кайса, унăн çурçĕр тата çурçĕр-хĕвеланăç енĕсене йышăнса илчĕç. Пирĕн боецсем тăшмана хытă кĕссе пычĕç, тăшман чăтса тăраймарĕ. Пирĕн боецсем тăшмана çав пунктран кăларса ывăрĕç. Тăшманăн кунта вилнисем çеç 100 çынна яхăн шутланаççĕ. Çак çапăçура пирĕн артиллеристсем тăшман миномечĕсемпе артиллерин пĕрер батарейине пĕтерсе тăкрĕç.

Тепĕр участокра нимĕçсем К. ялĕ çине атака пуçларĕç. Фашистсем атакăнă 200 çын кĕртсе ячĕç. Пирĕн артиллерист, вăйлăн персе тăрса, нимĕçсене сапаласа пĕтерчĕ, çапăçу хирне нимĕçсен 15 вилли выртса юлчĕ. Тепĕр пунктра пирĕн артиллери пеме пуçласа противник пулеметсем вырнаçтарса лартнă 4 ДЗОТ-не çĕмĕрсе тăкрĕ тата нимĕçсен 50 салтакне яхăн вĕлерсе пĕтерчĕ е амантрĕ.

Ытти участоксенче пирĕн войскăсем хăйсен оборонин рубежĕсене çирĕплетсе пыраççĕ. Иртнĕ талăк хушшинче противник çĕр çинче те, сывлăшран та разведка тăвассине вăйлатрĕ, хăшпĕр пунктсенче пирĕн оборона çине артиллерипе минометсенчен вăйлăн персе тăчĕ.

Çанталăк лайăх тăнине усă курса, ĕнер пирĕн сывлăш-çар вăйĕсем тăшманăн фронт патнелле пыракан çулсем çинчи мотомехколоннисене ăнăçлăн атакăларĕç. Çав çапăçусенче пирĕн авиаци фашистсенне 80 автомашинăна çити, 70 лав, виçĕ танк, виçĕ зенитнăй оруди тата штаб автобусне пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен салтакĕсене 700 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ.

Пирĕн бомбардировщиксен звени противникăн автомашинисемпе танкĕсем пухăннă тĕле вĕçсе пырса бомбăсем ăнăçлăн пăрахнă.

И. ДЕНЕНБЕРГ.

Тула патĕнчи хаяр çапăçусем

ТУЛА, ноябрĕн 26-мĕш. (ТАСС). Фронтăн Тула енчи çурçĕр-хĕвелтухăç участокĕнче малтанхи пекех хаяр çапăçусем пыраççĕ. Б. пункта тытса илнĕ хыççăн противник кунта 100 танк тытса тата пехотăпа пĕрле 200 автомашинăна çити илсе пынă. Çак группировкăна тăшман çурçĕрелле, маналла куçарма хăтланать. К. пункт патне пымалли çулсем çинче çапăçу пуçланса кайнă. Çак çапăçура фашистсен 20 танкĕ тытла пĕтнĕ, фашистсене каялла сирсе пăрахнă. Д. районĕнче фашистсен штабĕсенчен пĕрин çине пирĕн танкистсем хăюллăн пырса тапăлнă. Ытти профессионлă пĕлтерĕшлĕ çынсем, çăлăпса кайнă чухне, хăйсен вилнĕ тата ывăр аманнă салтакĕсене çунтара-çунтара янине палăртнă.

Совет летчикĕсен ĕçĕсем

ЛЕНИНГРАД ФРОНЧĔ, ноябрĕн 27-мĕш. (ТАСС). Пĕлĕтлĕ çанталăк тăнине, юр çунине тата тĕтре тăнине пăхмасăрах, пирĕн авиаци Ленинграда геройла хӳтĕлекенсене пулăпса пырать, тăшманăн укреплени пунктĕсем çине тек-текех пыра-пыра тапăнать. Совет Союз Геройĕн Данилов юлташăн авиаподразделенийĕсем У., И. тата Г. пунктĕсем çине вăйлăн пырса тапăннă. Тăшманăн окопĕсемпе траншейисем çине, огневой точкисем çине, тăшманăн войскисем пухăнса тăнă вырăнсем тĕлне фугаснăй тата çут хыпаракан бомбăсем ылтай пăрахнă.

Старший лейтенант Макаренко малтанхи кун тăшманăн Н. пунктĕнче пухăнса тăнă вăйĕсем çине бомбăсем пăрахнă, тăшман пехотин поселокалла куçса пыракан ушкăнне пĕтерсе тăкнă. Иккĕмĕш хут вĕçсе пырса, вăл нимĕç салтакĕсемпе тулса ларнă траншейăсем çине бомбăсем нумай пăрахнă. Бомбăсене тĕл пăрахма ăна пирĕн артиллери перспе тăракан снарядсем кăш тĕле ӳкнине асăрхани пулăшнă. Унтан тепĕр хут вĕçсе пырса, гитлеровецсем çине пулеметран пенĕ.

Комиссар Одинцов юлташ тăшман çине виçĕ хутчен вĕçсе пырса, 20—30 метр çуллĕшĕнчен персе, фашистсене питĕ нумай вĕлерсе пĕтернĕ. Виççĕмĕш хут вĕçсе пырсан нимĕçсен зениткисем Одинцовăн самолетне сиенленĕ пулнă, анчах çапах та Одинцов юлташ хăйĕн машинине хамăр войскăсем вырнаçса тăракан çĕре илсе çитернĕ.

Çанталăк татах та начарланнă пулин те, пирĕн летчиксем аллисене шурвалран вĕçертмеççĕ, противник çине çĕнĕрен те çĕнĕрен вĕçсе пырса вăйлăн тапăнаççĕ. Летчиксем: Смышляев, Калмыков, Степанов, Баранов, Филипповский, Стареков, Свитенко, Бойко, Ливончих тата ытти юлташсем хăюллă та паттăр пулнине, пысăк мастерлăхпа вĕçме пултарнине кăтартса параççĕ. Бомбăсем пăрахас, штурмлас тата разведка тăвас ĕçсене хутшăннă вĕçевĕçсен пĕтĕм составне Ленинград фрончĕн командованийĕ тав тунă.

Эрви пĕлтерни

ВАШИНГТОН, ноябрĕн 27-мĕш. (ТАСС). Пичет представителĕсемпе каласа çухне Рузвельтăн секретарĕ Эрви çапла пĕлтернĕ: Америка разведки пĕлтернĕ тăрăх, Германи, Шабат хулине аркатса тăкнă пекех, Белграда та пĕтерсе тăкма шутлать, мĕншĕн тесен Белграда сербсен партизанĕсем хăйсен бази туса усă кураççĕ. Эрви каланă тăрăх, нимĕçсем Белграда çавăрса илме, ун çине артиллерирен перспе тата сывлăшран бомбăсем пăрахса пĕтерсе тăкма шутлаççĕ.

Вашингтонри каласусем

ВАШИНГТОН, ноябрĕн 27-мĕш. (ТАСС). Хăлă ноябрĕн 26-мĕшĕнче Номурапа тата Курусупа калаçнă. Государство департаменчĕн представителĕ корреспондентсене çапла пĕлтернĕ: Япони представителĕсене пăхса тухма Хăлă документ тăратнă. Çав документа уйрăм принципсем тăрăх çырса хатĕрленĕ, ун çинчен Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем пĕрре çеç мар усси пĕлтернĕ. Государство департаменчĕ официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Японин представителĕсене Хăлă тăратнă документ юлашки эрнесенче пулса иртнĕ канашлусен кульминацийĕ пулнă пулса тăрать. Çавна палăртмалла: çулте асăннă документ чылай тĕп принципсенчен тухса тăрать; çав принципсемпе корреспондентсен паллашмалла, мĕншĕн тесен çав принципсем çинчен Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем пĕрре кăна мар пĕлтернĕ.

Официальнăй йĕркепе тунă заявленире çăмах тĕп принципсем çинчен пырать, тесе кăтартса панă.

Курусу тата Номура пичет представителĕсене çав ыйту тăрăх нимĕн те пĕлтерме килĕшмен. Японин представителĕсемпе пулса иртнĕ канашлу умĕн Хăлл Рузвельтпа калаçнă. Рузвельт унччен малтанах Китай посолне Ху-Шине тата Су-Дзи-Вена хăй патне чĕнсе илнĕ.

Таи оборонине Япони хăй аллине илме тăрăшать

НЬЮ-ИОРК, ноябрĕн 26-мĕш. (ТАСС) «Юнайтед пресс» агентствин Лондонри корреспонденчĕ ответлă çынсем çапла каласа параççĕ, тесе пĕлтерет: Японин пысăк вырăнта ĕçлекен представителĕ Таиро оборона ĕçне пĕтĕмĕшпех Японăн аллине лама хушнă. Таи правительстви çакăн пек требование йышăнман. Японецсем Таи правительствине хĕсме пăрахмаççĕ.

Париж округне нимĕçсен çар чăсĕсене илсе пынă

ЛОНДОН, ноябрĕн 25-мĕш. (ТАСС) «Дейли мейль» хаçатăн специальнăй корреспонденчĕ Мадридран çапла пĕлтерет: промышленноçлă районсене кăсхи вăхăтра ятарласах хуралламалла Париж округне Германин çар командованийĕ çак кунсенче «мобильная гвардия» войскисенчен 6000 салтак заказлăн илсе пынă. Париж полицийĕн префекчĕ Барт адмирал, забастовкăсем пуçласси тата нимĕçсем çине тапăнасси ӳссе пынине пула, çак салтаксене промышленноçлă районсене вырнаçтарма Штюльпнагель генералпа каласса тăнăлă. Нимĕçсем çине кăсхине массăллăн тапăнакансене чарса лартма Париж полицийĕн вăйĕ çитеймест, çавăнпа та «мобильнăй гвардие» халĕ çавăт пек тапăнусене пĕтерме ятарласах хушнă. Çакăн пек «мобильная гвардия» чăсĕсене Францин оккупациленĕ зонăри пысăк центрĕсенче, çăмахран, Бордо районне те кĕртеççĕ пулмалла. Корреспондент пĕлтернĕ тăрăх, нумай пулмасть Бордора тăракан нимĕç пехотин посчĕ çине гранатăсемпе хĕçпăшалланнă француз çамрăкĕсем пырса тапăннă. Ку тапăнура нимĕç салтакĕсем нумай вилнĕ.

Америка корреспонденчĕ Финляндири шухăш-кăмăлсем çинчен

НЬЮ-ИОРК, ноябрĕн 26-мĕш. (ТАСС) «Нью-Йорк таймс» хаçатăн Стокгольмри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: ун аллинчи шанчăклă сведенисем тăрăх, кăрçă пуçланнă чухне Германи çĕнтерессине шанса тăнă финн генералĕсенчен пĕр пайĕ халăхри вăхăтра Германи çак вăрçăра çĕнтерес çукки çинчен каласать. Корреспондент маналла çапла пĕлтерет: Финляндин генштабĕн сывăхĕнче тăракан çынсем ăна фронтри ĕçсем çинчен каласа панă пулать. Виçĕ эрне каярах Салла фронтĕнче финсен 2000 çынран тăракан икĕ батальонĕ совет территорийĕ çинче вăрçассине хирĕç тăнă. Финлянди халăхĕ вăрçа пула тарăхни,—тесе çырать юлашкинчен корреспондент,—Финлянди çарĕнче те сарăлса пырать.

—o—

ПВХО нормисене параççĕ

ШАХАСАН. Çак кунсенче Чураксси ялсоветĕнчи ПВХО инструкторĕсем колхозниксемпе колхозницăсене ПВХО значокĕн нормисене пама вĕрентсе çитереççĕ. Халĕ 209 çынна норма партнă та ăнтĕ. Çак ĕçре П. Васильев, А. Ефремова, М. Абрамова инструкторсем тăрăшса ĕçлеççĕ.

Ф. СЕМЕНОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ВЕСЬ ЖИЛОЙ ФОНД,
принадлежащий государственным предприятиям, учреждениям и организациям и Советам депутатов трудящихся,
подлежит обязательному страхованию.
Владельцы жилого фонда обязаны не позднее 1 декабря с. г. сообщить сведения о жилых домах и хозяйственных постройках при них, подлежащих обязательному страхованию, районным и городским инспекциям Госстраха на бланках установленной формы.
Бланки выдаются инспекциями Госстраха
3—2 Чувашгосстрах

Ирĕке кăларнă хулара

Войскăсем малалла кайрĕç. Пирĕн чассем ăнăçлăн туса пыракан операцин пĕр тапхăрĕ вĕçленчĕ, противникăн Малая Вишера кулинчен тата ун тавраппĕнчи ялсенчен ирĕксĕрех тухса кайма лекрĕ. Вăйлă укрепленисем тунă те, çав укрепленисенчен тăвăллăн вут-çулăм тăкни те, ĕрсе ӳсĕрлесе «пеншкăллă атакăсем» тунă те нимĕçсене пулăшмарĕ. Клыков юлташăн боецĕсем 8 кун хушши нимĕçсене вĕçĕмрен çапа-çапа аркатса пынă, çапла вĕсене хуларан хăваласа кăларнă. Нимĕçсен çухатăвĕсем питех те пысăк. Малая Вишера патĕнчи çапăçусенче фашистла захватчиксене сахалтан та 3000 çын вĕлерсе пĕтернĕ. Пирĕн летчиксем хăйсем кăна нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 1000 çын ытла пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 126-мĕш пехотнăй дивизине çапса çĕмĕрнĕ. Хулана йышăнса илсе, пирĕн войскăсем хăйсен ăнăçлă операцийĕсене малалла ӳстерсе пыраççĕ.

* * *

Акă хула та куç умĕнчех. Сӳсе илнĕ пӳрт çийĕсем, çалăпса кайнă чӳрече рамисем, çĕмĕрек кантăксем. Хăшпĕр тĕлте нимĕçсен приказĕсен татăк-кĕсĕкĕсем курăнса каяççĕ. Акă вĕсенчен пĕри: «Пĕлтерӳ. Хулари граждансем пурте вĕсен килте пĕрер килограмран ытла мар çăнăх тата 8-шар килограмран ытла мар çĕрулми пур, тесе подписка парассĕ. Тĕрĕслесе пăхсан, çăмăл та пулин çакăнтан ытларах е мĕнле те пулин запас тупăнсан, çавсене перспе пăрахатпăр. Хула комендантчĕ».

Çапла ĕнтĕ, кашни ытлашши килограмм çĕрулмишĕн—перспе пăрахасси. Нимĕç захватчикĕсем хулара пурăнаканскерсенчен сийĕнчех мĕнпур продуктсене туртса илнĕ.

Акă тепĕр приказăн содержанийĕ: «Хула совет председателĕн заместителĕ пулнă Зуев тата хула совечĕн председателĕ Петров халĕ те хуларах пурăннине эпир пĕлетпĕр. Зуева чĕрелле е ун вилнине тупса паракана пĕр центнер çăнăх парса наградăлатпăр. Петровшăн вара—икĕ центнер çăнăх паратпăр». Малая Вишера çыннисене нимĕçсем «пысăк наградăпа» илĕртнĕ пăхăтра Петров юлташ партизанла отрядăн боецĕ пулса тăнă, вăл нимĕç оккупанчĕсен пуçĕсене нимĕнле наградăсăрах каса-каса ывăтнă. Халь кăна вăл вăрмантан пулана тавăрăнчĕ. Çак хулара вăл тăватă çул хушши ытла хула совечĕн председателĕ пулса ĕçленĕ. Малая Вишера çыннисем ăна епле хаваслăн та ăшшăн кĕтсе илнине эпир куратпăр.

Хулана тавăрăнакан çынсем ăна тӳрех, урамрах ыйту пама тытăнаççĕ: — Михаил Петрович, пирĕн ăçта вырнаçмалла-ха? Пирĕн çурта ишсе хăварнă, —теççĕ.

Нимĕн те пулман пекех, Петров, хулпуççийĕ çинчен партизан карабинне илсе пăрахма та ĕлкĕреймеççĕ, совет ĕçлăхĕнчи питех те кирлĕ ыйтăвĕсене татса пама тытăнать. Председательпе пĕрле вырăнти ытти работниксем те, вăрманта партизанла çӳренĕскерсем, тавăрăнчĕç.

* * *

Хулара тата хула тавралăхĕнчи ялсенче пурăнакан çынсем питлерла пĕрăхурахсен тискер ĕçĕсем çинчен хаяр кăçă фронтне çапла çырать: «Пирĕн пĕчĕк ялтанах çак вăхăт хушшинче Кабилер Пауль, Мейер Франц, Аугсбургер Тео, Вассар, Эберман, Себальд, Брунмиль Фоглерăн 2 ывăлĕ, Винтерблат, Розăн пиччĕшĕ Вебер Эмиль, Ламер Цвикнагель, Оберберг—вилчĕç. Мĕнчухлĕ çамрăк çынсем! Вăрçă халех пĕтессе çеç шанаплăр».

Фердинант салтак патне Анна Панке çапла çырать: «Хаклă Фердинант, нумайĕшĕсем çинчен е вилнĕ, е аманнă тесен çавтери йывăр хыпарсем çитрĕç. Шкулта пĕрле вĕреннĕ манăн сывăх тус, май уйăхĕнче качча пухнăскер, паян акă хăйĕн упăшки вăрçăра вилни çинчен хыпар илчĕ. Пирĕн пĕлĕт çинчи аттемĕр—турă та пулин пире ăнланса илинччĕ, пире пурсăмăра та, уйрăмах сире, салтаксене, шулăшинччĕ».

Гитлер пуçласа янă вăрçа, Германи халăхне çавтери йывăрлăхпа асап кăтартакан тата куçуль тăктаракан вăрçа, Германи тата мĕн чухлĕ вăхăт чăтса тăма пултарĕ-ши? Çапăçусен кашни кунĕ, кашни сехечĕ фашистсене çĕнĕрен те çĕнĕрен сиен кĕрет, фашистсен салтакĕсемпе офицерĕсем вăрçăра вилеççĕ.

Можайск енче çапăçакан пирĕн чассенчен пĕри иртнĕ талăк хушшинче противник пысăк вăйпа виçĕ хутчен тунă хаяр атакăсене сире-сире пăрахнă. Çав çапăçусенче нимĕçсен виçĕ йывăр танкне, 2 çăмăл танкне, танксене хирĕç пемелли 7 орудине, вĕсен расчечĕсемпе пĕрлех, пĕтерсе тăкнă тата тăшманăн пехотинчен 200 çынна вĕлерсе пĕтернĕ.

Кĕрĕн лейтенант Чайкин ертсе пыракан разведчиксен группи, çĕрле сурă кайса, тăшман тăракан вырăна пырса тухнă, нимĕçсем сывăрнă пулнă. Пирĕн разведчиксем темиçе сурта вут тивретнĕ. Унтан разведчиксем тăшманăн тылне татах та шаларах кĕнĕ те, обоз çине тапăнса, штабăн 2 автомобильне пĕтерсе тăкнă, 4 офицера тата темиçе мотоциклиста вĕлерсе пĕтернĕ. Хăйсен часне разведчиксем пурте сывах тавăрнă.

Тăшмана хирĕç пыракан çавнашкал питĕ те хаяр çапăçусенче иртсе пыраççĕ 1941 çулти ноябрь уйăхĕнчи хăрушă, анчах та ĕçе татса паракан кунсем. Çав çапăçусем çакнашкал кăна вĕçленме тивĕç: епле пулсан та тăшмана маналла кайма çарас пулать. Тăшмана тытса çарасех пулать. Мускава хӳтĕлесе хăвармалла. Фашистсене çĕмĕрсе тăкас ĕçе столица патне пымалли вырăнсенче пуçламалла.

(«ПРАВДА»).

Тула патĕнчи хаяр çапăçусем

ТУЛА, ноябрĕн 26-мĕш. (ТАСС). Фронтăн Тула енчи çурçĕр-хĕвелтухăç участокĕнче малтанхи пекех хаяр çапăçусем пыраççĕ. Б. пункта тытса илнĕ хыççăн противник кунта 100 танк тытла тата пехотăпа пĕрле 200 автомашинăна çити илсе пынă. Çак группировкăна тăшман çурçĕрелле, маналла куçарма хăтланать. К. пункт патне пымалли çулсем çинче çапăçу пуçланса кайнă. Çак çапăçура фашистсен 20 танкĕ тытла пĕтнĕ, фашистсене каялла сирсе пăрахнă. Д. районĕнче фашистсен штабĕсенчен пĕрин çине пирĕн танкистсем хăюллăн пырса тапăлнă. Ытти профессионлă пĕлтерĕшлĕ çынсем, çăлăпса кайнă чухне, хăйсен вилнĕ тата ывăр аманнă салтакĕсене çунтара-çунтара янине палăртнă.

Хăюллă хĕрлĕ воинăн, Сосновский комсомолецăн, çавтери тĕлĕнмелле патăр ĕçне Хĕрлĕ Çар тата совет халăхĕ нихăçан та манас çук!

* * *

Хĕрлĕ Çар ирĕке кăларнă. Совет хулин урамĕсем татах чĕрĕлчĕç. Хулана тавăрăнакан çынсем пысăк мар çунашкасемпе хăйсен пурлăхĕсене турттарса пыраççĕ. Акă Дарья Петровна Иванова пырать. Хулана нимĕçсем йышăннă кун вăл пĕр красноармеецпа, хуларан тухса кайма ĕлкĕреймескере, çăлса хăварнă, ăна кăй упăшкин тумтирне парса тумлантарнă та тухса кайма пулăшнă. Снаряд лекссе çĕмĕрнĕ çуртăн хапхи патĕнче ачасем ушкăнĕ пухăнса тăнă. Вĕсем шуранка та тиеннĕм, начарланса кайнă, вĕсем усă сывлăша тухманни нумай пулать. Халĕ, хăйсен конькийĕсемпе çунашкийĕсене вăхăтлăха манса хăварса, ачасем нимĕçсем çинчен каласа параççĕ:

«Шинелĕсем вĕсен кăвак, мĕнпур лайăх çĕрулмине хăйсем тытса илчĕç, пире шăннă çĕрулми кăна хăварчĕç».

«Аваль, урам урлă çуртра пурăнакан викенне мĕнпур кровачĕсемпе матрацĕсене илсе кайрĕç».

«Пирĕн лампăри мĕнпур краççына ĕссе ячĕç».

«Аваль, асаттенне çав урамра çăматтисене уринченех хывса илчĕç, юр тăрăх вăл çара ураннах кайрĕ»..

«Тете! Пирĕн пата нимĕçсене текех ямаççĕ пуль ĕнтĕ?» теççĕ.

* * *

Халĕ, çак корреспонденцие телеграфпа панă вăхăтра, Ленинград облаçĕн районĕсенчен нимĕçсене малалла хăваласа, тасатса кăларассишĕн çапăçусем пыраççĕ.

М. ПОЛЯНОВСКИЙ,
Я. МИЛЬШТЕЙН.

Сурçĕр Хĕвеланăç фрончĕ,
ноябрĕн 27-мĕш

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—87, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, сырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, документсен — 6—23, «Ленин сулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 6679

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 557. Ф. б. 58 84 п. л.